Гордеев Д. Поэт юбилейĕ ячĕпе – выставка / Д. Гордеев // Коммунизм ялавĕ. – 1980. – 30 çу.

# ПОЭТ ЮБИЛЕЙĔ ЯЧĔПЕ–ВЫСТАВКА

К. В. Иванов çуралнăранпа 90 çул çитнĕ май республикăри музейсем хăйсен уйчченхи экспозицийĕсене çĕнетрĕç. Чăваш государство художество галерейинче поэта халалласа йĕркеленĕ выставка уçăлчĕ.

Шупашкарти К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен литература музейĕнче, сăмахран, çак кунсенче асран кайми тĕлпулусем сахал мар пулса иртрĕç. К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен государство премийĕн лауреачĕсем музее пынă çынсене хăйсен творчество планĕсемпе паллаштарчĕç, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ Р. Золотова К. В. Иванов тата И. Я. Яковлев çинчен аса илсе каласа пачĕ. Музейре поэт усă курнă япаласене, хăй аллипе тунă шкапа, çырмалли машинкăна кăтартаççĕ. Кунтах «Нарспи» поэмăн тĕрлĕ чĕлхепе пичетленсе тухнă экземплярĕсене курма пулать.

К. В. Иванов творчестви художниксене яланах хавхалантарнă. Вăтăрмĕш çулсенчех чăваш художникĕсем «Нарспи» поэмăна илемлетме, поэма тăрăх тĕрлĕрен ÿкерчĕксем тума тытăннă. Чăваш изобразительнăй искусствине пуçарса яракансенчен пĕрин Н. К. Сверчковăн произведенийĕсенчен пуçласа паян художество училищисенче вĕренекенсен произведенийĕсем таранах тăратнă Чăваш государство галерейинчи выставкăна. Кунта 100 ытла произведение кăтартаççĕ. Чăваш АССР тава тивĕçлĕ художникĕсем И. Т. Григорьевпа П. В. Сизов пултарулăхĕнче «Нарспи» поэма уйрăмах пысăк вырăн йышăнать. Вĕсем унăн кашни сыпăкне илемлетнĕ. Выставкăра çак художниксем тунă нумай-нумай ÿкерчĕксенчен чи лайăххисене куратпăр. Кашни художник, хăйне кăмăла кайнă меслетсемпе усă курса, аслă поэт творчествине туллин уçса пама тăрăшать. Вĕсем «Нарспи» поэма çуратнă шухăшсене сарса, чăвашсен авалхи пурнăçĕ çинчен каласа паракан произведенисем ÿкереççĕ, пĕтĕмĕшле сăнарсем тăваççĕ. Ку тĕлĕшпе РСФСР тава тивĕçлĕ, Чăваш АССР халăх художникĕ М. С. Спиридонов ÿкернĕ «Çураçнă хĕр» картина уйрăмах палăрса тăрать. Автор хăй каланă тăрăх, ку ÿкерчĕкре Нарспие мар, чăваш хĕрне кăтартнă, анчах куракансем вара ăна Нарспи тесе йышăнаççĕ.

Экспозици пуçламăшĕнче эпир Ленинградри И. Е. Репин ячĕпе хисепленекен живопись, скульптура тата ваяни институчĕн преподавателĕ П. Г. Кипарисов ÿкернĕ «Иванов юрă итлет» ятлă картинăна куратпăр. Ку картинăна темçе хутчен те репродукциленĕ, ăна шкул учебникĕсене кĕртеççĕ. Кунтах «Нарспи» драмăри рольсене вылянă артистсен портречĕсем пур. Вĕсенчен Сетнер амăшĕн ролĕнчи О. И. Ырзем, Нарспи амăшĕн ролĕнчи Е. В. Шорникова артистсен портречĕсем нумайăшне асра юлаççĕ.

Выставкăна уçнă чухне Чăваш АССР культура министрĕн заместителĕ А. Н. Емельянова тата художество галерейин пай заведующийĕ М. А. Карачарскова К. В. Иванова халалласа йĕркеленĕ выставка валли чăваш изобразительнăй искусствин чи лайăх произведенийĕсене суйласа илнине палăртрĕç. Ку чăнах та çапла. Чăваш АССР тава тивĕçлĕ художникĕн Ю. А. Зайцевăн «Тăхтаман вилĕмĕ» картини умĕнче çынсем нумайччен чарăнса тăраççĕ. Этем психологине тĕрĕс уçса паракан çак произведени пурнăç чăнлăхĕпе тыткăна илет.

Ф. С. Быков, Г. Д. Харлампьев, Н. И. Садюков, В. И. Агеев, В. А. Немцев художниксен картинисене, Н. П. Максимов «Нарспи» спектакль валли хатĕрленĕ декораци эскизĕсене куратпăр выставкăра. Кунта П. В. Сизов, А. И. Миттов, И. Т. Григорьев «Нарспи» поэмăна илемлетсе тунă ÿкерчĕксем уйрăмах пысăк вырăн йышăнаççĕ. Чăваш кĕнеке издательстви «Нарспи» поэмăна çак художниксен ÿкерчĕкĕсемпе темиçе хутчен те пичетлесе кăларнă. 1976 çулта поэма вырăсла тата чăвашла пичетленсе тухрĕ. Ку кăларăмра А. И. Миттов ÿкерчĕкĕсемпе усă курнă.

Экспозици Мускаври художество техникин училищинче вĕренекен Н. Е. Григорьева К. В. Иванов юбилейĕ ячĕпе ятарласа ÿкернĕ картинăсемпе вĕçленет. Чăваш АССР тава тивĕçлĕ художникĕн И. Т. Григорьевăн пĕтĕм творчестви чăваш литературин классикĕн К. В. Ивановăн творчествипе çыхăннă. Халĕ çав темăна ватă художникăн мăнукĕ малалла тăсать.

**Д. ГОРДЕЕВ.**